38-29

Кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке



ИВАН ИВНИК

# ТЕЛЕЙ ҪУЛӖ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1938



Иван Ивник

# ТЕЛЕЙ ÇУЛĔ

*Йумах*

Ӳкерчĕкĕсем
Г. Енгерăн

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1938

*КĔÇĔН ТАТА ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЬЛИ*



Ĕлĕкех мар, авал мар
(Суйеçтерме аван мар)
Аслă Атăл хĕрринче,
Сĕм вăрмансем хушшинче,
Йатсăр йалта, пĕр касра,
Тăйлăк-тайлăк кил-çуртра
Мучипеле кинемей
Пуранна тет хăйне май.

Телей тени вĕсене
Тыттарман тет шăпине.
Пĕр сăмахпа каласан,
Йумахри пек йуптарсан,
Пуранна тет йурлăпа,
Йалан çитмен пурнăçпа;
Выљăх-чĕрлĕх ĕрчемен,
Хур-кăвакал хунаман,
Тырă-пулă ăнăçман,
Пӳлĕхçĕсем пиллемен —
Йалан çитмен пурнăçра
Пуранна тет асапра.
Çитмĕл çула çитиччен,
Вăйран халран ӳкиччен,

Пурӑннӑ тет мӗскӗнсем
Ачапчасӑрах вӗсем.
Шухӑшлӑр-ха хӑвӑрах:
Питӗ йывӑр, ҫӑмӑл мар
Ватӑлӑхра вӑл вара
Ывӑл-хӗрсӗр пурӑнма.
Анчах ҫак та пулкалать:
Кӗркуннехи кунсенче
Хӑш чух пӗлӗт хушшинчен
Ҫут хӗвел те пӑхкалать...
Кам каланӑ ватӑсен
Килйыш хутшӑнмӗ тесе?
Пӗр ирпеле ӑнсӑртран
Карчӑк ывӑл ҫуратнӑ.

Карчӑкпала старике
Савӑнтарас тенӗнех
Ҫак килйышра, ҫемйере,
Ҫулсерен мар, кунсерен
Ывӑл ӳснӗ васкаса,
Ҫирӗп сывлӑхлӑ, таса.
Вӑл ывӑла хаљ епӗр
Ентри тесе чӗнӗпӗр.

Сехетпе мар, минутпа,
Йумахри пек сум-шутпа
Ӳсрӗ, ҫитӗнчӗ Ентри.
Мӗнлерех вӑл, пӗлтӗр-и?
Ҫитӗнчӗ те вӑл, курать:
Телей ҫуккӑ халӑхра,
Асаппала хӗн-хур ҫеҫ
Ашкӑнаҫҫӗ пур ҫӗрте.

Шухӑшлanӑ, тавҫӑрнӑ
(Лӑпкӑ кӑна ир пулнӑ),



*Çул йуппинче чул йупа—*
*Пӗлтерӳлӗ çырупа.*

Ватӑсене ал парса,
Йалне-йышне хӑварса,
Ентри кайаҫ ҫулпала
Хай телейе шырама.

Пӗр кун утаҫ, икӗ кун...
Телей тупни ҫук-ха ун.
Тата утаҫ малала, —
Унӑн телей тупмала.

Утаҫ, утаҫ ҫул тӑрӑх,
Кун кунларӗ, каҫ турӗ.
Пиллӗкӗмӗш ирхине
Ҫитрӗ пӗр ҫул йуппине.
Ҫул йуппинче чул йупа —
Пӗлтерӳлӗ ҫырупа.
Ҫакӑ ҫыру-пӗлтерӳ
Акӑ мӗне пӗлтерет:

„Сылтӑмала кайсассӑн,
Упа тӗлне пулӑн ес;
Сулахайа ҫул тытсан,
Ӑмӑрт-кайӑк курӑн ес“.
Ҫул йуппинче чарӑнса
Тӑчӗ те шухӑшласа,
Ентри утрӗ малала
Сулахайри ҫулпала.

Утаҫ Ентри, шав утаҫ,
Кун кунлаҫ те каҫ тӑваҫ.
Ҫӗр выртаҫ те пӗр йалта,
Татах утаҫ малала.
Мӗн пулаҫ те мӗн килет,
Курмалине курам, тет.
Кайсан-кайсан вӑл вара,
Ачамсем, ак мӗн кураҫ:

Аслă вăрман çиййнче
Хĕвел пăхаť пикенсе.
Çутă хĕвел çумĕнче
Пултарулă, хăватлă,
Çирĕп, вăйлă çунатлă
Ăмăрт-кайăк курăнчĕ.
— Капла ăçта çул йĕрлен? —
Кайăк ыйтрĕ Ентрирен.
Ентри ăмăрт-кайăка
Ăнлантарчĕ çаплала:
— Телей çук-çке халăха,
Çавă йачĕ шухăша.
Çав телейе шырама
Тухрăм епĕ çак çула.
Пурăнмашкăн унсăрăн
Çăмăл мар, хăвах куран.
Вăл телейе тупмала,
Тесе тухрăм çак çула.

Ăмăрт-кайăк Ентрийе
Ăс вĕрентрĕ ак мĕнле:
— Ырă çыннăм, йăнăшан,
Итле ес ман сăмаха.
Телей ӳкмест çул çине,
Çакна есĕ пĕл, ĕнен.
Ăна тытса илмеле,
Тытса илме пĕлмеле.
Ырă çыннăм, еп сана
Чукмар парап, ил ăна.
Вара есĕ унпала
Çул тыт киле кайала.
Кайсан-кайсан, сан тĕле
Упа тухĕ çул çине.
Кунĕ пĕтсе килнĕрен,

Мĕкĕрĕ вăл, çĕмĕрĕ.
Çăмăл пулмĕ кĕрешӳ.
Анчах вăйна ан шелле;
Çавă сĕмсĕр упана
Çапса ӳкер курсанах.
Çур ес унăн хырăмне,
Вара тупăн кирлине.

Ентри ăмăрт-кайăка
Чĕререн тав турĕ те,
Хай чукмара çĕклесе
Утрĕ телей çулĕпе.

Утаť Ентри, шав утаť,
Кун кунлаť те каç тăваť.
Пĕр кун утаť, икĕ кун...
Телей тупни çук-ха ун.
Татах утаť малала, —
Ун упана курмала.
Кайсан-кайсан, çул çине
Упа тухрĕ çĕмĕрсе.

Упа пычĕ ун çинех,
Мĕкĕрчĕ çине-çинех...
Ăмăрт-кайăк хушнă пек,
Ентри вăйне пухрĕ те
Пысăк йăвăр чукмарпа
Вирлĕн çапрĕ упана.
Упа пуçĕ саланчĕ,
Унăн ĕмри татăлчĕ.

Упа хырăмне çурса,
Кăларчĕ вăл пĕр арча —
Ылттăн арча, пысăк мар,
Йăтма çапах çăмăл мар.



*Ӑмӑрт-кайӑк хушнӑ пек,*
*Ентри вӑйне пухрӗ те...*

Ӳҫрӗ. Унӑн ӑшӗнчен.
Сиксе тухрӗҫ — ак тӗнче! —
Виҫӗ сурӑх, пӗр сысна,
Пӗр кӗрӗкпе пӗр сӑхман.

Икӗ ватӑ ир те каҫ
Ывӑлӗшӗн кулӗанаҫ.
„Ӗмӗрлӗхех ывӑла
Ҫухатрӑмӑр пулмала“,
Тесе хайсен ывӑлне
Асилеҫҫӗ кулленех.
Ӑҫтан пӗлччӗр-ха вӗсем
Ачи килсе кӗрессе?

Пӗррехине, ир ҫинче,
Алӑк сасси илтӗнчӗ.
Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Ентри
Килсе кӗчӗ. Пӗлтӗр-и?

Виҫӗ сурӑх, пӗр сысна
Килсе кӗчӗ картана.
Амӑш илчӗ сӑхманне,
Ашшӗ илчӗ кӗрӗкне.
Пӑхаҫ Ентри таврана,—
Йусанаҫ пек самана.
Аслӑ Атӑл хӗрринче,
Сӗм вӑрмансем хушшинче
Хурлӑх-асап пӗтет пек,
Йӑвӑр пурнӑҫ иртет пек.
Анчах чӑн-чӑн телейех
Тупас килет Ентрийӗн.

Шухӑшлана, тавҫӑрнӑ
(Лӑпкӑ кӑна ир пулнӑ),
Ватӑсене ал парса,

Йалне-йышне хӑварса,
Ентри кайаҫ̌ ҫулпала
Каллех телей шырама.
Пӗр кун утаҫ̌, икӗ кун...
Телей тупас килет ун.
Татах утаҫ̌ малала,—
Таҫта телей пулмалах.

Утаҫ̌ Ентри, шав утаҫ̌,
Кун кунлаҫ̌ те каҫ тӑваҫ̌.
Ҫакӑ телей ҫулӗпе
Кайсан-кайсан, пӗр ирпе
Каллех хӗвел ҫумӗнче
Пултарулӑ, хӑватлӑ,
Ҫирӗп, вӑйлӑ ҫунатлӑ
Ӑмӑрт-кайӑк курӑнчӗ.

Ентри ӑмӑрт-кайӑка
Сӑмах хушрӗ ҫаплала;
Сана йӑлӑхтарап-ха,—
Чӑн-чӑн телей пулмала,
Ҫав телейе тупмалах,
Тесе тухрӑм ҫак ҫула.
Кирек йепле пулсан та
Тупасшӑнах еп ӑна.
Ӑмӑрт-кайӑк Ентрийе
Ӑс вӗрентрӗ ак мӗнле:
— Телей ӳкмест ҫул ҫине,
Кӑна ес хӑвах пӗлен.
Ӑна тытса илмеле,
Тытса илме пӗлмеле.
Ырӑ ҫыннӑм, еп сана
Чукмар парап, ил ӑна.
Ил те, килнӗ ҫулпала

Килне васка кайала.
Кайсан-кайсан, сан тĕле
Кашкăр тухĕ çул çине.
Шăлне шаккĕ, ÿлĕ вăл,
Сана пăвма тăрĕ вăл.
Йăвăр пулĕ кĕрешÿ,
Анчах вăйна ан шелле;
Есĕ çавă кашкăра
Çапса ÿкер, ан хăра.
Çур ес унăн хырăмне,
Вара тупăн кирлине;

Ентри ăмăрт-кайăка
Чĕререн тав турĕ те,
Хай чукмара çĕклесе
Утрĕ телей çулĕпе.
Утать Ентри, шав утать,
Кун кунлать те каç тăвать.
Кайсан-кайсан, çул çине
Кашкăр тухрĕ ÿлесе.
Ăмăрт-кайăк хушнă пек,
Ентри вăйне пухрĕ те,
Пысăк йăвăр чукмарла
Вирлĕн çапрĕ кашкăра.
Кашкăр пуçĕ саланчĕ,
Унăн ĕмри таталчĕ.

Кашкăр хырăмне çурса,
Кăларчĕ вăл пĕр арча—
Ылттăн арча, пысăк мар,
Йăтма çапах çăмăл мар.
Уçрĕ. Унăн ăшĕнчен
Сикс тухрĕç-ак тĕнче!—
Пĕр лаша та пĕр ĕне,—
Савăнтарчĕç Ентрие.



*Пысăк, йăвăр чукмарпа*
*Вирлĕн ҫапрĕ кашкăра.*

Икӗ ватӑ ир те каҫ
Ывӑлӗшӗн кулҙанаҫ.
„Ӗмӗрлӗхех ывӑла
Ҫухатрӑмӑр пулмала“,
Тесе хӑйсен ывӑлне
Асилеҫҫӗ кулленех.
Ӑҫтан пӗлччӗр-ха вӗсем
Ачи килсе кӗрессе?

Пӗррехине, ир ҫинче,
Алӑк сасси илтӗнчӗ.
Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Ентри
Килсе кӗчӗ. Пӗлтӗр-и?
Пӗр лашапа пӗр ӗне
Илсе килчӗ вӑл килне.

Пӑхаҭ Ентри таврана,—
Улшӑнайрӗ самана.
Аслӑ Атӑл хӗрринче,
Сӗм вӑрмансем хушшинче
Хурлӑх-асап тӗп пулчӗ,
Йавӑр пурнӑҫ путланчӗ.
Ҫитрӗ кӗтнӗ самана,
Лайӑхланчӗ пурӑнма.
Анчах, темшӗн, пӗтӗмпех
Пурте пулсах ҫитмен пек.

Кураҭ Ентри, ӑнланаҭ:
Йурамасҭ-ха лӑпланма.
Ватӑсене ал парса,
Йалне-йышне хӑварса,
Татах тухаҭ вӑл ҫула
Чӑн-чӑн телей шырама.



*Унӑн ҫакӑ чукмарпа*
*Тата тилӗ тытмала.*

Утаӑ Ентри, шав утаӑ,
Кун кунлаӑ те каç тăваӑ.
Кайсан-кайсан, вăл татах
Кураӑ ăмăрт-кайăка.
Ăмăрт-кайăк паттăра
Чукмар пиллет, ăс параӑ.
Унăн çакă чукмарпа
Тата тилĕ тытмала.
Вара пĕтĕм телейпе
Пырса кĕрĕ вăл килне.
Ăс парана тав туса
Ентри утрĕ малала.

Нумай вăхăт иртмерĕ,
Чейе тилĕ тĕп пулчĕ.
Ентри çакă тилле те,
Ăмăрт-кайăк хушнă пек,
Чукмарĕпе тĕп турĕ.

Ентри çитрĕ те йалне,
Хăйне хăй те ĕненмест:
Ăна тăван йалĕнче
Йумахри пек туйăнчĕ.
Аслă урам тăршшипе
Çĕнĕ çуртсем çĕкленнĕ,
Керменсем пек курăнса,
Ларас чуна йăпатса.
Каç пулсассăнах йалта
Електрицă çутатаӑ.
Уйра-хирте йăран çук,
Унта ĕçлет хурçă ут.

Пăхаӑ Ентри йал çине—
Тулли телей çиçĕнет!
Ма тесессĕн—колхозра

Пурӑнат вӑл саванса.
Ампарне уçат Ентри—
Тырӑ-пулӑ куç тулли;
Кӗрет Ентри витене—
Самӑр утсем кӗçенеç;
Пӑхат Ентри картана—
Выљӑх тулли картара.

Унтан кӗрет те пӳртне,
Ӗненмест те курнине:
Ватӑ амӑшӗ, иккен,
Вулат ӑслӑ кӗнеке!

Йумах йатӑм, йуптартӑм,
Сире кӑштах тыттартӑм:
Упа пулнӑ—патша вӑл,
Кашкӑр пулнӑ—улпут вӑл,
Тилӗ пулнӑ—кулак вӑл.
Халӑх курас ырлӑха,
Халӑх пухас пурлӑха
Çавсем кӳпсе пурӑннӑ.
Ӗçчен халӑх телейне,
Ӗçчен халӑх тивӗçне
Хӑйсен туса пурӑннӑ.

Пултарулӑ, хӑватлӑ,
Çирӗп, вӑйлӑ çунатлӑ
Ӑмӑрт-кайӑк—Ленин вӑл,
Ӑмӑрт-кайӑк—Сталин вӑл.
Аслӑ Ленин ӑсӗпе
Чӑваш тупрӗ телейне,
Аслӑ Сталин ӑсӗпе
Чӑваш тупрӗ тивӗçне.

Аслă Атăл хĕрринче,
Чăвашсенĕн çĕрĕнче
Чечекленчĕ пурăнăç,
Ĕнтĕ пăх та кур ăна!
Телей тупса панăшăн,
Çав ик ăмăрт-кайăка
Пĕтĕм халăх тав тăвать.



*Редактор М. ЙЕНИК*
*Техредактор Ф. КОШКИН*
Послано
в производство
3-II-38 г. Подписано
к печати 7—III-38 г. Уполномоченный Чувашлита № 1547.
Заказ № 096. Тираж
5000 экземпляров.
Фор. бум. 62х92-32.
Об'ем 1,75 п. л.
*Тип. № 1 Чувашполиграфтреста*
*г. Чебоксары.*

ИВАН ИВНИК

●

**ПУТЬ К СЧАСТЬЮ**

Хакĕ 50 пус

ИВАН ИВНИК
ПУТЬ К СЧАСТЬЮ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ ★ 1938